К84.89(=Чув)
К36
Ч-42653

Василий КЕРВЕН

# АСАМЛĂ МĂЛАТУК

(Иссумбоси)



Национальная библиотека ЧР
4-042653

Обязат. экз.
К84.89(=чув)
К36

Василий КЕРВЕН

# Асамлă мăлатук

## (Иссумбоси)

Яппун халăх юмахне сăвăлла
каласа кăтартнă

ир



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2010

ПРОВЕРЕНО
20.. 28 СЕН 2017

УДК 821.512.111-93
ББК 84(2Рос=Чув)6-4-5
К 36

Художникĕ *Т.И. Немцева*

**Кервен В.Г.**
К 36 Асамлă мăлатук (Иссумбоси): Сăвăлла юмах. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2010. — 32 с.
ISBN 978-5-7670-1739-9

Поэт яппун ачисен чи юратнă юмахне сăвăласа каласа панă. «Асамлă мăлатук» тенĕ ăна чăвашла. Унта Иссумбоси — тĕп сăнар — ырă кăмăллă паттăр, усал-тĕселе çĕнтерет, телей тупать.

**УДК 821.512.111-93**
**ББК 84(2Рос=Чув)6-4-5**

**ISBN 978-5-7670-1739-9**

© Кервен В.Г., 2010
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2010

4-42653
ПРОВЕРЕНО
2010 28 СЕН 2017
...НАЛЬНАЯ
...БИБЛИОТЕКА
...ВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ



Пуръ̆ннӑ тет пӗр ялта
Мучипеле кинемей.
Ачи-пӑчи пулманран
Телей курман, эхехей.

Çавăнпа та йăлăнсах
Ывăл ыйтнă Хĕвелтен.
Леш хĕрхеннĕ вĕсене,
Хăтарайнă инкекрен.

Улма-çырла пахчинче
Арçын ача тупăнать.
Вăл, çав тери пĕчĕкскер,
Пуç пўрне пек туйăнать.

Çавăнпа та хайхине
Иссумбоси — Пўрнеске —
Тесе чĕнме килĕшсе
Ватăсем ят панă-çке.



Вăхăт иртнĕ ерипен...
Пиллĕкре е çиччĕре,
Вун пĕрте те вăл ӳсмест,
Пĕчĕк юлĕ ĕмĕрех.

Пултарать вăл чиперех
Ташлама та юрлама,
Анчах ашшĕ-амăшне
Вăйĕ çитмест пулăшма.

Тарăхтарнă çак инкек
Пĕчĕк Иссумбосине.
Ял ачисем çавrăнса
Пачах пăхман ун çине.



Унпа пачах выляман,
Хур кӑтартнӑ самаях.
Е «шӑши», е «лутака»
Тесе чӗннӗ пӗрмаях.

Чӑтнӑ-чӑтнӑ та куллен —
Хал ҫитеймен. Пӗринче
Вӑл шут тытнӑ инҫете
Тухса кайма килӗнчен.

— Каяс шӗкӗр хулана, —
Тенӗ ашшӗ-амӑшне, —
Ӗҫ тупайӑп тен унта
Вӑйӑм-халӑм ҫитнине.



Ярас килмен çав тери
Ăна мĕскĕн ватăсен.
Чухăн пурнăç хĕстерет,
Çимелли те çук вĕсен.

Пил параççĕ ывăлне
Укçа туса таврăнма,
Тăван киле хăвăртрах
Тĕрĕс-тĕкел çаврăнма.





Иссумбоси васкаса
Пуҫтаранать ҫул ҫине.
Хур тĕкне вăл тĕренме
Тытрĕ туя вырăнне.

Улăштарчĕ чей чашки
Питĕ кирлĕ сунчăка
(Тем курас пур ҫул ҫинче —
Ĕмĕр сакки сарлака.

Тĕл пулать ҫул ҫӳревре
Хăрушлăхсем тĕрлĕрен.
Ҫавăнпа та тимлесех
Ҫула тухма хатĕрлен).





Пĕчĕк улăм пĕрчинчен
Йĕнĕ пулчĕ чиперех.
Акă çипсĕр йĕп илсе
Унта чикрĕ вăл тӳрех.

Ăсатнă май ывăлне
Ăшĕ çунать ватăсен.
Пĕрле утрĕç унпалан
Укăлчаран тухиччен.

— Кай эс, — терĕç, — çак çулпа
Инçе çырма еннелле.
Çитме шĕкĕр хулана
Шыва хирĕç ишмелле.

— Ан кулянăр, ватăсем, —
Терĕ ача пуç тайса.
Вара утрĕ малалла
Пĕтĕм вăйне пуçтарса.



Утрĕ-утрĕ вăл вăрах —
Çырма тавраш çук та çук.
Вĕççĕр-хĕрсĕр тăсăлса
Выртать питĕ вăрăм çул.

Кăткă пулчĕ ун тĕлне.
Ăна курнă-курманах
Ача ыйтрĕ: — Калăр-ха,
Ăçтан тухас çырмана?

— Ай, вăл питĕ аякра.
Шур чечексен хушшипе
Малтан утса тухмалла —
Çитĕн вара ерипе.

— Ырă Кăткă, тав сана, —
Пуç тайрĕ çул çӳрекен.
Аран-аран палăран
Сукмак чĕнчĕ тӳрĕрен.



Иссумбоси шав васкать —
Шур чечексем сайрарах.
Шурлăх курăкĕ часах
Хуçаланать таврара.

Шалт халтан кайса çитсен
Илтрĕ хумсен шăв-шавне,
Шăлне çыртсах, тăрăшса
Тухрĕ çыран хĕррине.

Шывра мĕнле ишмелле?
Кимĕ пулчĕ — чей чашки.
Халь хур тĕкĕ кĕсменех,
Тупаймастăн ун пекки.



Пӗтӗм вӑйран пӗчӗкскер
Кӗсменӗпе авӑсать,
Шыв юххине ҫӗнтерсе
Мала кайма тапӑҫать.

Иссумбоси киммине
(Тӗттӗм килсе хупласан)
Хӑмӑш ҫумне кӑкарса
Выртрӗ лӑпкӑн хутланса.

Ҫапла виҫӗ кун хушши
Вӑл тертленчӗ ишнӗҫем.
Акӑ ҫыран хӗрринче
Курӑнайрӗҫ шеп ҫуртсем.



Нумайран та нумайрах
Пулчĕç вĕсем куç тĕлне.
Капăр кĕпер айĕнчен
Ача тухрĕ ирхине.

Чаплă шĕкĕр хулана
Çапла çитрĕ-çке аран.
Халăх хытă хĕвĕшет,
Вăл ун чухлĕ çын курман.

«Халь ăçта çул тытмалла?» —
Иссумбоси шалт аптрать.
Ыйтса пĕлес ĕç пирки,
Анчах ăна кам тăнлать.

Тăчĕ-тăчĕ те хытса
Вăл шутларĕ танккама —



Аякранах курăнан
Çурта пырса шаккама.

Лапчăтасран хăраса
Асăрханса çеç утать.
Ăçта халăх сахалрах —
Тӳрехваскать вăл унта.

«Кермен пекех çурчĕ ку.
Пĕр-пĕр çĕрте пулăшма
Ман валли ĕç тупăнĕ», —
Тесе ача шухăшлать.

Кĕчĕ пĕчĕк хушăран
Улма-çырла пахчине.
Чул картлашка тĕлĕнче
Пăхса илчĕ çурт çине.



— Кам та пулин тухăр-ха!
Пурăнаççĕ-и аван!
Иссумбоси — эпĕ ку! —
Кăшкăрчĕ вăл пур вăйран.

Мăйăхлă çын тухрĕ те
Утса анчĕ пусмапа,
Унта-кунта çаврăнса
Мăкăртатрĕ сăмсапа:



— Тӗлӗнтермӗш япала,
Такам кунта найкӑшать,
Анчах никам курӑнмасть,
Тамаша тӑк тамаша...

И-42653



НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ



— Эпӗ кунта, эп кунта,
Сирӗн сӑмса айӗнче!
Асӑрханса пусӑр-ха,
Пӑхӑр мана айккинчен!..

Ҫак ҫын тӗлӗнчӗ курсан
Питӗ пӗчӗк ачана.
Ҫӗклерӗ те ал лаппи
Ҫине хучӗ вӑл ӑна.

— Кам пулатӑн, мӗн тума
Килтӗн эсӗ ҫакӑнта?
— Иссумбоси эп, ялтан,
Ӗҫ тупасчӗ, тупата.



Кулса ячĕ те этем
Унран ыйтрĕ, хучĕ шак:
— Паттăр çул çӳревçĕ, эс
Мĕн тума пĕлетĕн çак?

— Курăр! — тесе вăшт кăна
Ача «хĕçне» йĕннинчен
Кăларчĕ те — шăнана
Тирсе лартрĕ мăйĕнчен.

— Юрламашкăн эп ăста, —
Хавхаланчĕ пĕчĕкскер.
Вăл кăтартрĕ ташласа
Ытарма та çук чипер.

— Юрĕ, эппин, юл кунта, —
Пулчĕ хайхи ыр сăмах.
Ханакона, ун хĕрне,
Вăл килĕшрĕ уйрăмах.



Пике çырнă вăхăтра
Тытса тăрать шур хутне.
Е тата, вылянă чух,
Илсе парать шакмакне.



Савăнтарать çынсене
Чаплă юрă-ташăпа.
Эппин, кĕске каласан
Унăн япăх мар шăпа.

Вăхăт иртни сисĕнмест,
Темиçе çул — хыçалта.
Ак Ханако пĕринче:
— Тухас, — терĕ, — уçăлма.

Пĕрле илчĕ хăйĕнпе
Йышлă тарçă-тĕрçине.
Хăвармарĕ вăл, паллах,
Пĕчĕк Иссумбосине.



Таврăннă чух каялла
Сиксе тухрĕ виç шуйттан:
Симĕссипеле хĕрли,
Хури тата хыçалтан.

Симĕссипе хĕрлĕскер
Сăнă тытнă, çăлнăç çук.
Хурин çăмлă аллинче
Пур асамлă мăлатук.





Çула пӳлчĕç шуйттансем.
— Вăрлар, — теççĕ, — çак хĕре!
Иссумбоси чалт сиксе
Мала тухма ĕлкĕрет.

— Кайăр кунтан ырăпа! —
Тарăхса вăл кăшкăрать.
Иссумбоси парăнмасть:
— Хăвăр юлăр мăшкăла!

Сиксе ӳкрĕ самантрах
Симĕс шуйттан çинелле.
Хăвăрт чикрĕ ун куçне
«Хĕçĕпеле» — йĕппеле.



Усал шуйттан, симĕсскер,
Симĕсленчĕ витĕрех.
Ыратнăран çухăрса
Вут тивнĕ пекех йĕрет.

Ача хура шуйттана
Тирчĕ-тирчĕ хĕçĕпе.
Лешĕ хытă хуралса
Пач çухалчĕ, çиçĕм пек.

Тарăхтарчĕ çав тери
Çакă хĕрлĕ шуйттана.
Карчĕ пысăк çăварне
Çăтма арçын ачана.



Иссумбоси хăрамасть.
Хатĕр тăчĕ çапăçма.
Сиксе кĕчĕ çăварне
Ун чĕлхине шăтарма.

— Парăнатăп! Ыратать! —
Çухăрашрĕ мур шуйттан.
Сиксе анчĕ тин вара
Арçын ача çăвартан.



Лешĕ хытă тарнă май
Мăлатукне ӳкерет.
Ăна ача çĕклесе
Ханакона сĕнчĕ тет:



— Ырă пикем, йышăнсам,
Ку — асамлă мăлатук.
Çĕре çапсан виç хутчен —
Çыннăн çитмен ĕмĕт çук.

— Илтĕн ăна çапăçса,
Пултăр ĕнтĕ хăвăнтах,
Çиттĕр санăн ĕмĕтӳ, —
Хĕр пиллерĕ тав тусах.

— Ĕмĕт? Ĕмĕт тенĕрен,
Ман вăл — пысăк пуласси.
Çакă çутă тĕнчере
Асси памасть ним усси.



Мӑлатукпа виҫ хутчен
Пике ҫӗре шаккасан
Ытармалла мар кӗрнек
Йӗкӗт пулчӗ ачаран.



Иссумбоси паттăра
Пĕлмен çын çук хулара.
Ханакона юратса
Качча илчĕ вăл вара.

Ватă ашшĕ-амăшне
Илсе килчĕç кермене.
Пурте пĕрле савăнса
Пурăнчĕç тет ĕмĕрне.



Литературно-художественное издание

*Для детей младшего школьного возраста*

**Василий Кервень**
**(Василий Гаврилович Кошкин)**

АСАМЛĂ МĂЛАТУК
(Иссумбоси)

ВОЛШЕБНЫЙ МОЛОТОК
(Иссумбоси)

Японская сказка в стихах
*На чувашском языке*

Редактор *О.Л. Федорова*
Художник *Т.И. Немцева*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректор *Н.П. Печникова*
Компьютерная верстка *М.В. Филипповой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Подписано к печати 12.01.10. Формат 70х100 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л.2,58. Уч.-изд. л. 2,07. Тираж 2000 экз. Заказ № 11. Изд. № 4.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Минкультуры Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
Отпечатано в ООО «Чебоксарская типография №1»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

Чăваш
кĕнеке
издательстви